Çамрăксен ыйтăвĕсемпе

# Пĕрлĕхре – вăй

***Çамрăксен пĕрлешĕвĕсем республикăри пур кĕтесре те вăй илсе пыраççĕ. Тĕрлĕ канашсем ял тăрăхĕсен шайĕнче кăна мар, районсен шайĕнче те ĕçлеççĕ. Пирĕн Муркаш районĕнче те пĕлтĕр, декабрĕн 26-мĕшĕнче, депутатсен районти Пухăвĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕ çамрăксен Парламенчĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Унăн ĕçĕ-хĕлĕ пирки тĕплĕнрех паллаштарма Парламент ертӳçине – Муркашри тĕп библиотекăн директорне Елена Геннадьевна ЧЕРНОВАНА каласа пама ыйтрăм.***

**– Елена Геннадьевна, çамрăксен Парламентне мĕнле тĕллевпе йĕркеленĕ?**

– Çак Парламента çамрăксем те патшалăха ертсе пырас ĕçрен аякра тăрса ан юлччăр тесе йĕркеленĕ. Право тата политика культурине, çĕр-шыва юратнине тата халăхшăн явапллăха туйса аталанса пырассине çамрăксен те хутшăнмалла. Професси хăнăхăвĕсем те, çынсене ертсе пырассин хăнăхăвĕсем те çакăнтанах пуçланаççĕ. Пирĕн тĕп тĕллев вара – çамрăксен ыйтăвĕсене хӳтĕлесе вĕсене малалла çул парасси.

Пирĕн Парламент членĕсем депутатсен районти Пухăвĕн комисси ларăвĕсене хутшăнаççĕ. Унта çамрăксен ыйтăвĕсене тата прависене хускатакан тĕрлĕ саккунсене, йышăнусене тишкерес ĕçе туса пыраççĕ. Хăш-пĕр йышăнусене, программăсене хатĕрлес ĕçре пирĕн шухăшсене те шута хуни малалла ĕçлес кăмăла хăпартать.

**– Районти ял тăрăхĕсем çумĕнче, тĕрлĕ организацисенче çамрăксен канашĕсем пур. Парламент вĕсемпе çыхăнса ĕçлет пулĕ?**

– Çапла. Эпир депутатсен Пухăвĕпе ĕçлесе пыни çамрăксен проблемисене тата тарăнрах тишкерме ыйтать. Çавăнпа та парламент эсир асăннă канашсемпе тачă çыхăнса ĕçлет. Кунсăр пуçне эпир республикăри Парламент евĕр ытти пĕрлешӳсемпе те çыхăну тытма тăрăшатпăр. Кăçал акă Йĕпреçре иртнĕ республикăри çамрăксен политики тата хушма вĕрентӳ проблемисене сӳтсе явнă çĕре хутшăнтăмăр. Çамрăксен малашлăхĕ пирки калаçрăмăр. Çакăн евĕр тĕл пулусене малалла та хутшăнсах тăрасшăн. Пĕрле канашласа ĕçлени республикăри, районти çамрăксен ыйтăвĕсене туллин курма, тишкерме май парать.

**– Камсем вĕсем районти çамрăксен Парламенчĕн членĕсем?**

– Парламентра 18 çултан пуçласа 35 çулччenхи ĕçлекен çамрăксем. Пурĕ 15 çын. Вĕсем тĕрлĕ отраслĕсенче ĕçлеççĕ, районăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен. Çавăнпа та çамрăксем хăйсен ыйтăвĕсемпе пирĕн пата яланах килме пултараççĕ. Пирĕн хушăра ял тăрăхĕсенчи çамрăксен канашĕсен ертӳçисем те (И.В. Егоров – Катькас, Л.В. Храмова – Мăн Сĕнтĕр, О.В. Яковлева – Шетмĕпуç), учительсем те (Р.Н. Сапожников – Муркашри лицей, А.М. Степанов – Калайкасси шкулĕ), медицина, райпо ĕçченĕсем те (Е.М. Кожевникова – Муркашри тĕп больница, П.А. Бирюков – Муркаш райповĕ) тата ыттисем те пур. Хамăрăн тĕп ĕçсемпе эпир, каларăм ĕнтĕ, тĕрлĕ специалистсем, анчах çамрăклăх пире пĕрлештерсе, вăй парса тăрать. Парламентра питĕ активлă та хастар çамрăксем хăйсене шаннă ĕçе яваплăха мала хурса туса пыраççĕ.

**– Ырă ĕçсен çулталикĕнче Парламент хăйне лайăх енпе кăтартма май тупрĕ-и?**

– Паллах, ырă ĕçсене яланах тумалла. Ку çул эпир тунă ĕçсенчен пĕри вăл – Муркашран пуçласа Пăсăрман ялĕ таран çӳп-çап пуçтарни. Çул хĕррисене, унти йывăç посадкисене тасатрăмăр. Çакна ырă ĕç тесех шутлатпăр.

Малашне вара хамăр ĕçпе ватăсене те савăнтармалли майсем туса парасшăн. Ку малаллахи планра. Пан вара пирĕн кашнин хăй ĕçлекен вырăнта çамрăксемпе тачăрах çыхăнса ĕçлемелле.

**–Тавах, Елена Геннадьевна, калаçушăн. Малашне çамрăксен Парламента хăйсен канăç паман ыйтăвĕсемпе тухасса шанас килет.**

– Çапла пултăрччĕ. Эпир пĕрле пулсан çеç вăйлă пулăпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

Милици хроникинчен

## Вăйне ниçта чикеймен

Муркашра пурăнакан пĕр çемье пусĕ хăйĕн арăмне алла кĕрес тытсах: «Вĕлеретĕп!» – тесе хăратнă. Ирхи сакăр сехетрех кĕресе йăтма вăй çитерекенскер питĕ ĕçчен çын пулнă-ши? Тен ĕçрен çапла çăлăнăç шыранă. Кăнтăрла иртсен те «паттăрлăхне» кăтартма чарăнман. Çак пӳтсĕр арçын арăмне те, хăйĕн 10 çулхи хĕр ачине те хĕнесе пĕтернĕ.

Арçын ĕлĕкренех çемьене хӳтĕлекен пулнă. Кунран вара çемьен хӳтĕленмелле пулса тухнă. Вăя ĕçре пĕтерсен пустуй чух кĕреçе йăтма та йывăр пек туйăнать. Уголовнăй ĕç пуçарасси вара çак арçын хăйне кĕреçепе çапнă пекех пулса тухнă.

## Телефонпа та хăратаççĕ

Кĕсье телефонĕсемсĕр пурнăç сук теççĕ те, тепĕр чух вĕсемпе те пурăнма хĕн иккен. Акă сентябрĕн 5-мĕшĕнче каçхи вунă сехет тĕлĕнче Муркашра пурăнакан хĕрарăмăн телефонĕ çине пĕлтерӳ килет. Хăрарăма тискеррĕн хĕнесе пĕтерессипе çинчен пĕлтернĕ 1987 çулта çуралнă çамрăк. Çак шӳтсĕр ĕçĕн вĕçне следстви кăтартса парĕ.

## Çăкăршăн суя укçа панă

Уйрăм предпринимательсем хăйсен лавккисенче те çăкăр сутас тесе, паллах, çăкăр завочĕсемпе килĕшӳ тусах ĕçлеççĕ. Тиесе пыракан çăкăршăн вара чĕрĕ «укçа» параççĕ. Рыккакассинчи «Лотос» лавкка «МоргаушиХлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа та çак йĕркепех ĕçлет. Анчах нумаях пулмасть çак лавкка сутуçинчен çăкăршăн 1 пин тенкĕлĕх суя укçа «килет». Автоçул хĕррисенче вырнаçнă лавккасенче суя укçа пуласси сăлтавĕсем те нумайрах. Ăçтан тупăннă-ха çак укçа? Ку ыйту çине следстви хурав парĕ.

Спорт

## Олимп чемпионкин парнисемшĕн

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче районта пысăк спорт уявĕ иртет. Çав кун Муркашри стадионта çăмăл атлетика енĕпе Олимп чемпионкин Валентина Егорован парнисене çĕнсе илессишĕн ăмăртусем иртеççĕ. Унта ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен, учреждениесен, ял тăрăхĕсен тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен командисем вăй виçеççĕ. Ăнăçу сунатпăр спортсменсене!

**Хамăр инф.**

Пĕлме интереслĕ

# «Тумĕ» хитре, шалта вара...

Паян тавар туса кăларакансем хăйсен продукцине капăр «тум тăхăнтартма» вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ. Кун пек тавар магазин сентрисем çинче аякранах курăнса тавар туянакана илĕртет. Пирĕнтен нумайăшĕ вара çак чăкăр чĕркесенчи пылак çимĕçсене, ăшаланă çĕр улмине тата ытти тĕрлĕ апат-çимĕçе нумай шутласа тăмасăрах туянать. Хаклăраххисен пахалăхĕ лайăхрах тенине те пуçрах тытатпăр-ха. Анчах пур чухне те таварăн хакĕпе хитрелĕхĕ ун пахалăхĕпе çыхăнса тăмасть. Шалта, апатçимĕç ăшĕнче вара мĕн-ха?

Тавар туса кăларакансем чĕркесем çинче белоксем, çусем, углеводсем мĕн чухлĕ пулнине кăтартнине пурте лайăх пĕлетпĕр. Пылаклатакан е тата тĕс кĕртекен веществосем, консервантсем пирки вара тĕплĕн пĕлсе каймастпăр-ха. Тĕслĕхрен, чĕрке çинче «Е 121 пур» тесе çырни тăрăх мĕн калама пултаратпăр-ши эпир? Паллах, нимех те. Кăтартнă вещество апат-çимĕçре сахал пулсан та çын организмĕ çине хăй витĕмне кӳретех. Кăна çак пулăма тишкерекен ăсчахсем те тахçанах ĕнентернĕ ĕнтĕ. Апат-çимĕçре тĕл пулакан хăшпĕр хутăшсем организмăн синлĕ, теприсем тата пачах та çимелли ăшĕнче пулмалла маррине тĕпчевçĕсем кăтартса пани пирки те илтмен мар. Çапах та хамăра валли туянакан апат-çимĕçре хăрушă веществосем пуррине нумай чух пăхмастпăр. Тутлă тесех çиетпĕр.

Çулла магазинтан питĕ капăр чĕркери печени туяннăччĕ. Кунашкаллине малтан çисе курманччĕ те çак апатра мĕн-мĕн пур-ши тесе чĕрке çинче çырса панине тимлесех вуларăм. Куç тĕлне «Е 131» тесе çырни пулчĕ. Çак веществопа юрих интереслене вăл рак чирне пуçарса яма пулăшни пирки тупса вуларăм. Ачасене ку печенине сайлас шухăш çав самантрах пĕтрĕ. Теприне çав магазинах хам пухнă «ăспа» çула туярăм. Эп маларах туяннă печени пĕтнĕччĕ-ха. Кофе ăшне ямалли типĕ тутлă хăйма чĕрки çине пăхса илтĕм. Ун çинче вар-хырăм ĕçне йĕркерен кăларакан «Е 340», «Е 341» веществосем пуррине кăтартнăччĕ. Шкул ачисем тăтăшах илекен (магазинсенче хам асăрханă тăрăх) «Хубба бубба» жвачкăра, паллах, мĕнрен тунине кура тĕс кĕртекен веществосем те, «Е 320» холестерин та пур иккен. Тепĕр «рейдра» «манăн» печени каллех сентре çине туханă вырăнччĕ-ха. Апла пулсан çынсем илесçĕ тесе шутласа иртсе кайрăм çеç.

Аяларах вара, хисеплĕ вулакансем, час-часах апат-çимĕç чĕркисем çинче тĕл пулакан «Е-сене» илсе кăтартамза сире валли. Мĕнлерех веществосем вĕсем?

Е 102 - хăрушă
Е 103 - юраман
Е 104 - иккĕлентерекен
Е 105 - юраман
Е 110 - хăрушă
Е 111 - юраман
Е 120 - хăрушă
Е 122 - иккĕлентерекен
Е 123 - питĕ хăрушă, АПШ-ра чарнă
Е 124 - хăрушă
Е 125 - юраман
Е 126 - юраман
Е127 - хăрушă
Е130 - юраман
Е131 - рак пуçаракан
Е 142 - рак пуçаракан
Е 152 - юраман
Е 171 - иккĕленӳллĕ
Е 173 - иккĕленӳллĕ
Е 180 - иккĕленӳллĕ
Е 210-217 - рак пуçаракан
Е 221-224 - пыршăлăх пăсăлни
Е 230-232 - ӳтшĕн сиенлĕ
Е 239, Е 240 - ӳтшĕн сиенлĕ
Е 250, 251 - юн пусăмĕ пăсăлни
Е 310, Е 312 - вĕтĕ шатрасем
Е 320, Е 321 - холестерин
Е 330 - рак пуçаракан
Е 338-341 - вар-хырăм пăсăлни
Е 407 - вар-хырăм пăсăлни
Е 450 - вар-хырăм пăсăлни
Е 461-466 - вар-хырăм пăсăлни
Е 467 - иккĕленӳллĕ.

**Пичете Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Ывăлăма

Анчах ача пек, ывăлăм, эс манăн
Утма вĕрентĕн, пулнăран каласма.
Тин çеç кăна эс садике çӳреттĕн,
Кашни кунах пĕсеттĕм эп сана.
Ĕнер кăна пек эс класа кĕни,
Вырнаçран шăппăн партта хушшине.
Куç умĕнчех тетрадь уçса хуни,
Пĕрремĕш палласем чĕтревлĕн çыранни.
Пĕчĕк пӳрнӳ сан ывăнатчĕ час,
Канса пĕрех уçаттăн тетраде,
Сырсан-сырсан каллех хавас
Алла илеттĕн эсĕ «Букваре».
Вара пуçлаттăмăр санпа ак вулама.
Вĕрентекенĕн çепĕç сасси хыççăн
Пӳрнӳсем йĕрлетчĕç сыпăксем,
Тутусем калатчĕç сăмахсем.
Саксем веçех ĕнер кăна пулни.
Ак паян тухатăн эс шкултан.
Тепре каяс тесен те эс унта
Тус-юлташсем пулмĕçĕ çав кунта.
Çулсем иртсен те яланах вара
Ырри те, усалли те сан асра.
Ырри çул патăр вăл сана ялан,
Усалли юлтăр пăрăнса тастан.

**Лариса ПАСТУХОВА.**

Анаткас Турай ялĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления


Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель населенных пунктов, с кадастровым номером 21:17:220301:117, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Ягаткино, ул. Ф. Тимофеева, площадью 3399 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

**Утерянный аттестат о среднем образовании серии Б № 3978322, выданный Ярабайкасинской СОШ 24 июня 2005 г. на имя Ядыкова Виталия Александровича, считать недействительным.**

**Продается автомобиль ВАЗ-21110 2001 года выпуска. Цвет – серебристо-желто-зеленый, в хорошем состоянии. Цена договорная. Обращаться по тел.: 8-927-992-28-29.**

**Срочно продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-917-672-36-84.**

**Декабрьте иккĕмĕш хут пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-858-24-27.**

**«Меркурий-центр» приглашает за покупками. Всегда в ассортименте: офисная бумага, тетради, канцтовары, книги, игрушки и мн. др. Заказ по каталогу. Выгодные цены. Работаем по безналичному расчету.**
**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, 5.**
**Тел.: 8-927-993-58-33. 1-3.**

**Приглашаем продавцов с опытом работы с канцтоварами. Магазин «Меркурий-центр». Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 5. Тел.: 8-927-993-58-33. 1-2.**

**Удостоверение участника боевый действий РМ 718933, выданное на имя Макарова Владимира Васильевича, считать недействительным.**

**Висçĕ пăруланă хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-919-667-65-72.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-4.**

**КАРТЫ ОПЛАТЫ ОПТОМ. (Мегафон, Смартс, Билайн, МТС, ON). Тел.: (8352) 62-81-14, 29-68-68. 8-8.**

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения, выдает займы. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 14-20.**

**ЗАО «МСО «Моргаушская» предлагает квартиры в д. Москакасы Моргаушского района ЧР:**
**- однокомнатные квартиры - площадью от 40 кв. м.**
**- двухкомнатные квартиры - площадью от 61 кв. м.**
**До 1 октября 2008 года цена за 1 кв. м. 22 000 рублей.**
**Требуются на работу рабочие строительных специальностей: сварщики, электрики, плотники, столяры. Оплата своевременная.**
**Обращаться в ЗАО «МСО «Моргаушская», д. Юнгапоси Моргаушского района ЧР. Тел.: 32-2-23 (бухгалтерия), 2-21-19 (приемная). 2-4.**


Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование члену Совета старейшин при главе администрации района, члену районного Совета ветеранов Тяминой О.В. по поводу кончины любимого мужа
**ТЯМИНА**
**Леонида Кузьмича.**

Администрация Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района выражает искреннее соболезнование председателю Совета ветеранов сельского поселения Тяминой О.В. по поводу кончины мужа
**ТЯМИНА**
**Леонида Кузьмича.**


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

**Зам. гл. редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 16.09.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3594.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.